Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

60 (7591) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи августăн (çурла) 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Вырма – 2008

## Каçалăк хыççăн каçалăк



Ĕнерхи кун тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене 2011 гектар çинче вырнă. Ку вăл мĕн пур лаптăкăн 14,7 проценчĕ. Ĕçсем тĕпрен илсен йăлтах кĕрхи культурăсен пуссисенче пыраççĕ. Уйрăммăн илсен хуçалăхсем кĕрхи тулăна 1714 гектар (50 процент) вырса кĕртнĕ. Е. Андреев яч. хис., «Восток», «Оринино», «Передовик», «Свобода», хуçалăхсем кĕрхи тулă пуссисенче вырма ĕçĕсене вĕçленĕ. Кунпа пĕрлех кĕрхи кунсенче хуçалăхсем ыраш пуссисене тухнă. «Хир карапĕсем» асăннă культурăна 217 гектар çинчен (19 процент) пухса кĕртнĕ те. Вырма пынă май улăм пухасси те хăш-пĕр çĕрте «хир карапĕсем» хыççăнах пулса пырать. Асăннă куна районĕпе 548 гектар çинчи (27 процент) улăма пуçтарса хунă. Пĕтĕмĕшле ĕçсем «Восток», Ильич яч. хис., «Ударник», «Свобода» хуçалăхсенче ăнăçуллăрах пыраççĕ. Районти вăтам тухăç гектар пуçне 27,1 центнерпа танлашать. Ку вăл пĕлтĕрхи çак тапхăрти кăтартуран 6 центнера яхăн пысăкрах.

Вырма пынипе пĕрлех хуçалăхсем выльăх апачĕ янтăлассипе те тимлеççĕ. Паянхи куна хуçалăхсем 6788 тонна утă (70 процент), 4781 тонна сенаж (53 процент), 22446 тонна силос (61 процент) хатĕрленĕ.

«Восток», «Оринино», «Свобода» хуçалăхсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе кӳлĕннĕ: пĕтĕмпе 125 гектар çĕртме сухи тунă.

**Хамăр инф.**

Пирĕн ентешсем – ĕç паттăрĕсем

## Мал туртăмлă доярка



*Юлашки çулсенче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ палăртнă «Агропромышленнăç комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану çулне уçса ĕçлеме вăй панине, хăйсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине вĕсене çĕнĕлле пăхма хистенине, кашнин умнех çĕнĕ тĕллевсем лартса çакна валли çĕнĕ ĕç мелĕсем алла илме, производствăна çĕнĕ технологисем кĕртме хавхалантарнине пурсăмăр та курса тăратпăр. Мĕн тетĕр эсир? Пăр тапранчĕ, çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннисен продуктивлăхĕ ӳсрĕ. Анчах кун йĕркинче темĕнле проект-программа пулсан та, конкретлă ĕçлекен ĕçталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пур, пулĕ те.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Ольга Витальевна Петрова 8-мĕш çул «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн Çĕньял Шурчари ĕне ферминче ĕçлет. Ĕçри кăтартăвĕсене вăл çултан çул ӳстерсе пырать. Иртнĕ çул хастарскер районти чи нумай сĕт сăвакан пулнăччĕ. Районти ĕнесене машинăпа сăвакан çамрăк операторсем хушшинче кăçал ирттернĕ конкурсра çĕнтерннĕскер, республикăра та район ятне ямарĕ, 4-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ.*

*Çамрăк доярккăн ĕçĕсем малашне те ăнасса пĕрле ĕçлекенсем çирĕп шанаççĕ. Çапла пултăрччĕ.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çырăнтару – 2009

## Çитес çул валли çырăнтараççĕ

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

***Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!***

**Райхаçат редакцийĕ.**

Район администрацийĕнче

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2008 çулхи августăн 8-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе çак ĕçченсене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă

Нумай çул тухăçлă вăй хунăшăн тата активлă общественлă ĕçшĕн:

**Юлия Васильевна МИХАЙЛОВАНА,** «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» предприятин строительство участокĕн штукатур-малярне.

**Владислав Валерианович НИКОЛАЕВА,** «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» предприятин строительство участокĕн столярне.

**Александр Юлианович СКВОРЦОВА**, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалистне-экспертне.

Строительство отраслĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн:

**Юрий Николаевич ЗАМЯТИНА,** Муркашри кирпĕч завочĕн оборудовани наладчикне.

**Нина Максимовна НИКИТИНАНА,** Муркашри кирпĕч завочĕн хуралçине.

**Михаил Николаевич СЕЛЮШКИНА,** «Моргаушская» МСО водительне.

**Валентина Борисовна СУВОРОВАНА,** «Моргаушская» МСО инженерне.

Культура сферинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:

**Роза Петровна НИКОЛАЕВАНА,** Кашмашри Культура çурчĕн директорне.

Кредит

## Килти хушма хуçалăха аталантарма

Йывăрлăхсем умĕнче алă усма хăнăхман ял çынни вĕсене çĕнтермелли майсем шырать. Ĕç укçисем пысăк мар тан килти хушма хуçалăх çине пысăк шанчăк хума тивет. Ял хуçалăх продукцийĕн хакĕ чакать пулин те укçа ĕçлесе илмеллех. Çапла вара ял çынни сĕтпе аш-какайне, пахча çимĕçĕпе улми-çырлине туса илсе сутма тăрăшать.

Килти хушма хуçалăха аталантарма августăн 1-мĕшне районти 340 çын кредит илнĕ. Пĕтĕмпе 55 миллион та 448 пин тенкĕлĕх. Уйрăмах çак ял тăрăхĕсенче пурăнакансем ытларах кредитлă пулнă:

Çатракасси – 35 çын,
Муркаш – 32 çын,
Турай – 30 çын,
Москакасси – 29 çын,
Мăн Сĕнтĕр – 28 çын,
Оринин – 26 çын.
Катькас – 26 çын,
Ярапайкасси – 26 çын.

Укça-тенкĕпе шутласан та Çатракассисем малта. Вĕсем пĕтĕмпе 6 миллион та 762 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ. Москакассисем вĕсенчен кăшт çеç каярах юлнă: 6 миллион та 469 пин тенкĕ.

**Хамăр инф.**

Кам епле ĕçлет?

### Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче августăн 12-мĕшĕ тĕлне пĕр ĕне пуçне мĕн чухлĕ сĕт сунине кăтартни (килогрампа)

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 8,3 | 2,6 |
| «Волга» | – | -14,0 |
| «Восток» | 9,9 | -2,1 |
| «Герой» | 12,4 | -0,2 |
| К. Иванов яч. хис. | 6,7 | -1,7 |
| Ильич яч. хис. | 11,2 | -2,6 |
| Ленин яч. хис. | 10,8 | 0,8 |
| «Лидер» | 13,8 | 13,8 |
| «Оринино» | 13,0 | -0,4 |
| «Передовик» | 8,4 | 1,3 |
| «Свобода» | 10,6 | -3,1 |
| «Сеятель» | 11,1 | 6,7 |
| Суворов яч. хис. | 13,0 | -0,1 |
| «Рассвет» | 11,0 | 2,6 |
| «Ударник» | 12,2 | -0,2 |
| Чапаев яч. хис. | 10,4 | 3,4 |
| «Чемеево» | – | -7,7 |
| Чкалов яч. хис. | 12,2 | 0,1 |
| «Хлебороб» | 8,2 | 8,2 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **11,2** | **0,1** |

Конкурс

## «Çулла, кĕнекесем тата эпĕ – юлташсем!»

Çак ятпа Муркашри ача-пăчасен библиотеки вулавçăсем хушшинче конкурс ирттерет. Конкурс июлĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса августăн 25-мĕшĕччен иртет. Активлă вулавçăсем валли ятарлă «Юмористическая викторина» тата «Герои русских народных сказок» кроссворчĕсен брошюрисене хатĕрленĕ. Конкурса çу кунĕсенче 15 кĕнекерен кая мар вуласа тухнă ачасем хутшăнма пултараççĕ.

Çĕнтерӳçĕсене палăртнă чух ачасем миçе хут библиотекăна пулнине, миçе кĕнеке вуласа тухнине, конкурс задайĕсем çине хуравсем панине шута илеççĕ. Кашни тĕрĕс хуравшăн – 5 балл. Конкурса августăн 30-мĕшĕнче «До свиданья, лето» уявра пĕтĕмлетеççĕ.

Республикăра

## Илемлĕхпе тирпейлĕх – тĕп вырăнта

Çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче, «Росинка» «Физкультурăпа сиплев центрĕ» республика патшалăх учрежденийĕнче, Министрсен Кабинечĕн тата район-хула пуçлăхĕсен Чăваш Республикин Президенчĕ çумĕнчи Канашĕн анлă ларăвĕсем иртрĕç.

Республика пуçлăхĕ пухăннисене çакăн çинчен аса илтернĕ: «Росинка» сиплев центрĕнче пулса курни вĕсене татах тăрăшарах ĕçлеме хавхалантармалла. «Эсир кунта курнă илемлĕхе хăвăр патăрта туса хума укçа-тенкĕ нумаях та кирлĕ мар. Çакăн валли тăван çĕре, çурт-йĕре, куллен ĕçлекен çынсене чăннипех юратни, тавра курăма ӳстерни, культурăпа ытларах интересленни кăна кирлĕ»,– тенĕ Чăваш Ен Президенчĕ.

Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче Чăваш Республикин экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн 2008 çулхи 1-мĕш çур çулти кăтартăвĕсене тата Чăваш Республикин республика бюджетне мĕнлерех пурнăçланине сӳтсе явнă. ЧР экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ Иван Моторин пĕлтернĕ тăрăх, çак тапхăрта республика экономики малалла çирĕп утăмпа кайнă, вăл тĕп отраслĕсен экономики юлашки çулсенче аталаннин никĕсĕ çинче çирĕпленнĕ.

Иван Моторин пĕрремĕш çур çулта муниципалитет районĕсемпе хулисен экономика кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Хула округĕнчен пĕрремĕш вырăна Шупашкар, иккĕмĕшне Çĕнĕ Шупашкар çĕнсе илнĕ, районсенчен пĕрремĕш вырăнта Шупашкар районĕ, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Етĕрнепе Муркаш районĕсем.

Канашăн анлă ларăвĕнче Чăваш Республикин республика бюджетне мĕнле пурнăçлани, шкулсенче ачасен çуллахи канăвне епле йĕркелени, вĕрентӳ учрежденийĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрлени, уй-хирти вырма ĕçĕсем пирки те ыйтусем пăхса тухнă.

Ыйтусем кĕтетпĕр

## Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр-и?



***Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Педагогсемшĕн те, ашшĕ-амăшĕсемшĕн те канăçсăр вăхăтсем çитрĕç. Пĕрремĕшсен шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлемелле, иккĕмĕшсен - çак шкулсенче пĕлӳ илес текенсене. Хумханупа пĕрлех тĕрлĕ ыйтусем те çук мар. Çавна май эпир районти вĕрентӳ пайĕн ертӳçине Л.И. Мочалова вулакансенчен килекен ыйтусем çине хуравлама ыйтрăмăр. Сирĕнтен вара, ашшĕ-амăшĕсем, паянпа ыран ыйтусем кĕтетпĕр.***

***Юн кунпа кĕçнерни кун редакцие 2-11-38 телефонпа шăнкравлăр е кĕрсе тухăр. Çитес эрнере шăмат кун тухакан номерте вĕрентӳ пайĕн ертӳçин хуравĕсене пичетлетпĕр.***

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, хунямана, кукамая – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Наталия Ивановна НАЛИМОВАНА** августăн 14-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр.

Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

---

Юратнă мăшăра, аннене – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Валентина Николаевна ЧУГУНОВАНА** 45 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пулччăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, хĕтипе тăхлачи, çывăх тăванĕсем.**